# АФИША




## КАНФЕТ КОРОЛЕВИ ТАТА АСАМЛĂ ÇУЛ ÇЎРЕВ

***Усал Аçтаха çури Канфет Королевин пылак кученеçпе тултарнă миххе вăрласа каять. Уява кам çăлĕ-ши?***

Ку асамлă интермедире тĕрлĕ призсемпе сюрпризсем, конкурссем пулĕç. Ун хыççăн ачасен «Куçкĕски» театр студийĕ лартнă «Снежная Королева» премьерăна курма пулать.

***Раштавăн 25 -мĕшĕнчен пуçласа 2007 çулхи кăрлачăн 6-мĕшĕччен пулать. Çĕнĕ çулччен 10.00 -11.00, Çĕнĕ çул хыççăн 11.00 тата 14.00 пуçланать.***

***Вырăнĕ: Ачасен пултарулăх керменĕ. Адресĕ: Президент бульварĕ, 41. Инçесас: 62-39-02.***

***Хакĕ: 40 тенкĕ.***

## «ЕЛОЧНЫЙ ШАРДАМС»

Хĕл Мучи, Юр Пике тата юмахри персонажсем раштавăн 30-мĕшĕнче 12.00 сехет тĕлне А. Николаев ячĕллĕ парка чĕнеççĕ.

Паркра Шупашкар хулин ёлкине савăнăçлă лару-тăрура уçĕç. Тўлевсĕр.

## «ХРЮША ПАТĔНЧЕ ХĂНАРА»

Хăнасем чи малтан Чулхулара пурăнакан Ольга Удалова çыравçăн юмахĕ тăрăх латрнă «ÇĔНĔ ÇУЛ УМĔНХИ ТАМАШАЛЛĂ ВĂРМАН» спектакль пăхĕç. Кайран вĕсене уяв сюрпризĕсем, вăййăсем кĕтеççĕ.

**Раштавăн 26-30-мĕшĕсенче — 10.00 тата 13.00 сехетсенче, раштавăн 30-пе кăрлачăн 6-мĕшĕсенче — 11.00 тата 14.00 сехетсенче пуçланать.**

**Вырăнĕ: Вырăсдрама театрĕ. Адресĕ: Шупашкар, Гагарин ур. 14.**

**Хакĕ: 60 тенкĕ.**

# ÇĔНĔ ÇУЛ ИСТОРИЙĔ

Эсир вырăссем уявлакан Çĕнĕ Çул 306 çул тултарнине пĕлетĕр-и? Çак факт I Петĕр патша хушăвĕнчен паллă. Вăл Çĕнĕ Çула кăрлачăн пĕрремĕшĕнчен, çул шутлавне Христос çуралнăранпа шутлама хушу кăларнă пулнă.

Паллах, çав вăхăтран нумай шыв-шур юхса иртнĕ пулин те паянхи хĕллехи уявсенче çут çанталăк тĕнĕ паллисем тата мешехисем юлнă.

Çĕнĕ Çулăн чи паллă юрри — «В лесу родилась елочка». Унăн авторĕ кам пулнă-ши? Ăна Раиса Адамовна Кудряшова тесе чĕннĕ. Вăл вĕрентекен, библиотекарь, поэт. 1903 çулта çырнă çўллерех асăннă сăвва Л. Бекман композитор хăйĕн хĕрĕ валли кĕвĕленĕ. Çак юрă ачалăхăн юрри пулса тăнă.

Великобританире сĕтеле раштав кукăлĕпе илемлетеççĕ. Авалхи рецептсемпе килĕшўллĕн, ăна пуласлăхпа шăпана уçакан япаласемпе: çĕрĕпе — туй пуласса, тимĕр укçапа — пуянлăха, пĕчĕк таканпа — ăнăçăва, тултармалла пулнă.

# ХĔЛ МУЧИ

Раççейре ачасене Çĕнĕ Çулпа Хĕл Мучи саламлать. Аçтан тупăннă-ха çак шур сухал? Иккен, I Петĕр патша чухне Çĕнĕ Çула елкăпа кĕтсе илме пуçланă. Европăри пек мифологилле персонаж симĕс лăсăсем айĕнче парнесемпе кучченеçсем салатма пуçланă. Тĕрлĕ çĕр-шывсенче унăн рольне гномсем, эльфсем пурнăçлаççĕ. Раççейре унăн ячĕ нумай вăхăт хушши паллă пулман. Парнесене салатакана Микула тете, Ватă Рупхерт, Морозко тесе чĕннĕ. Юлашкинчен ăна Хĕл Мучи теме пуçланă. Вăл аппĕ-амăшĕ ачисене хăратнă персонажран хĕллехи уява йĕркелекен ырă асамçă пулса тăнă. Халĕ пурте вăл вăрманти кайăк-кĕшĕкпе туслине пĕлеççĕ.

Чи малтан унăн тăлăпĕ кăвак тĕслĕ пулнă. Октябрьти переворотченхи открыткăсем çинче Хĕл Мучи шурă тăлăпа та çўрет. Çак переворот хыççăн Хĕл Мучи çĕнĕ влаçшăн кирлĕ мар пулса тăнă. 1935 çулта кăна елкăсем ирттерме ирĕк панă.

# ЧĔРКЕЛЕНЧĔКСЕМ — ЧУН ТĔКĔРĔ

**Графологшăн /çын мĕнле çырни урлă унăн характерне пĕлекен/ çын телефонпа калаçнă, кичем урокра ларнă, ресторанта заказ кĕтнĕ, ĕçлĕ калаçусем чухне телефон кĕнекисем, хут салфеткисем, хаçат уйăсем çинче ўкернĕ чĕркеленчĕксемпе ўкерчĕксем питĕ кăсăклă. Вĕсем этемĕн шалти тĕнчене тĕпчеме май параççĕ.**

Чĕркеленчĕксем питĕ расна. Анчах та вĕсен пĕрпеклĕхсем пур.



1. Пўрте, пўлĕмри сĕтел-пукана ўкерекен хăтлăхпа артаклăха килĕштерет. Çакăн пек ўкерчĕксем пĕччен çынсен нумай. Çак ўкерчĕксене темле ўкерсен те ăна ўкерекен килти хăтлăх патне туртăнать.

2. Чечексемпе çулçăсене ўкерме юратни — çын ырă пулнине кăтартать. Вăл ыттисене пулăшма юратать, çемçе характерлă та вашават.



3. Çынсене ўкерекенсене хутшăну çитмест е вĕсем çынсемпе ĕçлеççĕ. Çак çынсем пур компанийĕн чунĕ. Анчах та çын сăнĕсем килпетсĕр пулсан, ўкерчĕксен авторĕсене тем вĕчĕрхентерет, тем çырлахтармасть.

4. Виçкĕтеслĕх, овал, тăваткал — çын ертўçĕ пулма çуралнине кăтартать. Нумай чухне çак нумайкĕтеслĕхре кĕтессене штрихланă, чертеж авторĕ вара тĕрĕс орнаментсем ўкернĕ. Вĕсем шанлама тата ĕçе йĕркелеме пултарассине кăтартаççĕ.



5. Авăнăчăк, илемлĕ йĕрсем — çын пахматлă /тактичный/, тĕрлĕ ыйтусемпе кăсăкланнине, калаçăва тытса пыма пултарнине пĕлтереççĕ.

6. Тĕкĕсене тăрмаланă, ятарласа пысăк чĕрнесемпе ўкернĕ кайăк — лайăх шухăшлакан, кулăша хаклакан çын палли. Тĕлĕнмелле чĕр чунсемпе пулăсем çав категоринех кĕреççĕ.

7. Çĕлтăр ўкерекен çын — оптимист. Вăл йывăрлăхсем умĕнче те пуçне усмĕ.

8. Ытти ўкерчĕксемпе çыхăнман çаврашкасене ўкерекен çын çўллĕ чун идеалĕсемлĕ.

9. Скрипка уççипе музыка нотисем — аталаннă çанна кăтартаççĕ.



10. Тетрадь-блокнот уйăсене чĕресемпе — ўкернĕ çын романтик чунлĕ тата сентименталлă.

11. Маскăсем. тĕксем, çунатсем — çын вылянчăк кăмăллă тата çăмăлтай.

12. Меланхоликсемпе флегматиксем тĕрлĕ тумламсем ўкереççĕ.